28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

НОЯБРЬ
23
ЭРНЕКУН
227 (6978) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлашăр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Советĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

СОВЕТ ÇЫННИСЕН ТВОРЧЕСТВĂЛЛĂ ÇĔНТЕРĔВĔСЕМ

Совет халăхĕн творчествăллă вăй-хăвачĕ ĕмĕрне те иксĕлес çук. Социализмлă строй совет сыннисене вĕçĕмсĕр малалла аталанса пымалли, культура тĕлĕшĕнчен çитĕнмелли, хăйсен пултарулăхĕсемпе таланчĕсене кăтартса памалли питĕ нумай майсем туса пачĕ. Коммунистсен партийĕ совет халăхне этемлĕхĕн аслă пахалăхĕсене вĕрентес тесе наукăпа техникăна, культурăна, пирĕн государствăн экономикине хăвăртрах аталанса пыма пулăшас тесе тăтăшах тăрăшса çĕлет.

Ленин—Сталин партийĕ хавхалантарнипе тата ертсе пынипе совет сыннисем хăйсен çĕршывне хăватлă держава туса хучĕç, промышленноçа вăйлăн аталантарчĕç, пысăк электростанцисем, промышленноçла пысăк хуласем туса лартрĕç, вунпилĕк, çĕршер пуян районсене Таван çĕршывăн çĕлемелле турĕç.

Этем çĕçĕнчи пур майра та—промышленноçра, илукăра, культурăра, ялхуçалăхĕнче—пирĕн сынсем çав тери пысăк çитĕнӳсем турĕç. Сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче Совет çĕршывĕн хуçалăхĕпе культурин çав тери пысăк утăмсемпе малалла аталанса пычĕ. Социализмлă Таван çĕршыв совет сыннисене хастаррăн та мухтавлăн ĕçлеме хавхалантарчĕ, совет сыннисем вара хамăран Таван çĕршыва тата пуяцрах, вăйлăрах та илемлĕрех тăвас тесе мĕн кирлине пурне те турĕç. Пирĕн ледоколсем Çурçĕрти Тинĕс çулне уçрĕç. Совет самолечĕсем хаяр Арктика урлă вĕçсе кăсрĕç. Пирĕн стратостатсем чи çӳле вĕçсе хăпарчĕç. Летчиксем пĕтĕм тĕнчери рекордсем турĕç. Совет ученăйĕсен алдинчен тĕнчери наука центрти поляр бассейнĕнче пулса иртекен процессем çинчен тĕрĕс сведенисем илчĕ.

Вăрçă пуçланчĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пĕр пĕччен кĕрешсе совет сыннисем хăйсене большевиксен партийĕ панă паллăлăхсене уйрăмах уçăмлăн кăтартрĕç. Аслă Ленин çапла каланă: совет сыннисен тĕп пахалăхĕ паттăрлăх, хăюлăх пулмалла, кĕрешӳре вĕсем хăрама пĕлмелле мар, хамăран Таван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç пĕр хăрамасăр кĕрешме хатĕр пулмалла, тенĕ. Хамăран Таван çĕршыва хӳтĕлес идея Хĕрлĕ Çарти пиншер геройсене тăвăплатрĕ, вĕсем вара курайми тăшмана хирĕç кĕрешнĕ чухне хăюлăхпа хастарлăх, âсталăх тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç. Хĕрлĕ Çарта паттăрлăх массăллă япала пулса тăчĕ. Ахальрен мар ĕнтĕ пирĕн халăх хăйĕн çарне юратса паттăрла çар тесе ят панă. Халăх ирĕкĕ, большевиксен партийĕн ирĕкĕ, аслă Сталинăн ирĕкĕпе âслăлăхĕ совет сыннисене çĕнтерӳсем патне илсе пычĕ.

Таван çĕршыва юратнипе хавхаланнă совет конструкторĕсем пĕтĕм тĕнчипе чи лайăх истребительсем, штурмовиксем, бомбардировщиксем, хăватлă тупăсем, гвардеецла минометсем, хăватлă танксем, хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем, шыв айĕн çӳрекен кимĕсем туса пачĕç. Çапăçу хирĕнчи хаяр тĕрĕслевре пирĕн çар техникин нимĕçсен техникинчен лайăхрах пулни палăрчĕ. Совет конструкторĕсен творчествăллă шухăшĕ, совет индустрийĕнчи ĕççыннисен творчествăллă ĕçĕ кунта та çĕнтерчĕ.

Вăрçă вăхăчĕ иртсе кайрĕ, çĕршыв мирлĕ аталану тапхăрне пырса кĕчĕ. Совет правительстви, Ленин—Сталин партийĕ вăрçă кӳрсе хăварнă сурансене хăвăртрах тӳрлетсе çĕршыва малалла аталанма май парас тесе, çав тери тимлĕн тăрăшаççĕ. Мирлĕ пурнăçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах пирĕн халăх творчествăллă ĕçе, тăшман вăрă-хурăпа килсе тапăнса татнăскере, хĕрӳллĕн тытăнчĕ. Нимĕç оккупанчĕсем аркатса хăварнă районсенче предприятисене, культурăпа наука учрежденийĕсене, коммунальнăй сурт-йĕрсене, ялхуçалăх производствине юсас е çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе çав тери пысăк та хĕрӳллĕ ĕç пырать. Кунта çакна палăртсан та çителĕклĕ: Украинăра нимĕçсем аркатса хăварнă машинăсем тăвакан шултăра 95 заводран 93-шĕ халĕ ĕçлеме тытăннă та; иртнĕ çулта кăна гитлеровецсем аркатса е ишĕлтерсе хăварнă 200 аслă шкула уçнă.

Аплă Совет Союзĕнчи пур хуласемпе ялсенче те пирĕн тĕрĕс ĕç пĕтĕмпех çĕнтерни творчествăллă çĕнĕ ĕçе çĕклентерчĕ. Халĕ çĕнĕ заводсем, цехсем, шахтăсем ĕçе кĕрсе пыраççĕ. Пĕтĕм çĕршывĕпех пысăк строительство пырать. Магнитогорскра мартенсем, рудана пуянлатакан фабрикăсем, Астраханьре гидроэлектростанци, Мариупольри заводра питĕ пысăк прокат цехĕ, Липецкра трактор завочĕ, Ульяновскра, Днепропетровскпа Кутаисире автомобиль завочĕсем тăваççĕ.

Совет халăхĕн творчествăллă ĕçĕ питĕ анлăн сарăлса кайрĕ. Социализмлă строй, Совет влаçĕ пур халăхсене те хăйсен духовнăй вăйĕсене туллин палăртма май парать. «Советсем мĕнпур халăхсене наципллĕ культурăна пĕрмаях малалла хăпартса пыма май панинче, нацоллĕ талантсене вĕрентсе çитĕнерессишĕн (активлăн тăрăшма, пĕртан праволлă совет халăхĕсем хушшинчи туслăха тата пĕрпĕрне тăванла пулăшассине ӳстерсе пыма май панинче, —çаксенче пурнинче те эпир совет демократийĕн пурне те çĕнтерекен вăйне, вăл мĕнпур халăхсене чăн-чăп прогрессиллĕ аталантарас ĕçре аслă вырăн йышăнса тăнине куратпăр. Çакă вăл кивĕ Российăра пулман тата çакă вăл монархи режимĕлĕ е республика режимĕллĕ пытти нимĕнле çĕршывра та çук-ха». (Молотов).

Çак прогреса, совет сыннисен çак çĕнтерĕвĕсене эпир Совет государствин пурнăçĕн пур пайĕсенче те кулленех куратпăр. Çакă чи пысăк япаларан пуçласа чи пĕчĕккине çитиех—çав тери хăватлă гидроузелсене проекцилессинчен пуçласа Чукотка çурутравĕнчи ярангисенче куçса çӳрекен библиотекăсене организацилессине çитиех палăрса тăратъ. Кашни кунах эпир совет сыннисен мухтавлă ĕçĕсем çинчен, вĕсен çĕнтерĕвĕсем çинчен хыпарсем илсе тăратпăр. Çав ĕçсемпе çĕнтерӳсем пĕрле пĕтĕссе пирĕн социализмлă строя çирĕплетеççĕ, Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин ĕçне малалла илсе пыраççĕ, пирĕн советлă Таван çĕршывăн мухтавне çĕклентереççĕ.

Чĕрĕ те анлă âс-тăн, тĕллев паллалăхĕ, творчествăллă хавхалану, çирĕп характер, Таван çĕршывăн ырлăхĕшĕн мĕнпур вăя пама хатĕрри,—çакăн пек ĕнтĕ совет сыннисем пур ĕçре те ăнăçлăн кăтартса паракан пахалăх. Шăпах çакăн пирки ĕнтĕ паллă каменщиксем Андрей Куликов, Иван Рахманин, Семен Максименко строительство практикинче ку тараннчен курман тухăçлăхпа ĕçленĕ. Владивостокри грузчиксем пароход планĕнпалăртнинчен 16 хут хăвăртрах пушатнă. Капитолина Шорина колхозница гектартан 111 тонна çĕрулми туса илнĕ, Михаил Макеев комбайнер сезонра 2.758 гектар тырпул пухса кĕртнĕ. Çак новаторсем ку тараннченхи нормăсене хăюлăн сирсе пăрахрĕç те наукăпа техника кăларса тăратнă требованисене тивĕçлĕ çĕнĕ нормăсем туса хучĕç.

Çав тери пысăк йывăрлăхсене пăхмасăрах, Совет правительстви вăрçă вăхăтĕнче те çĕршыври культура строительствишĕн çав терӳ тимлĕн тăрăшрĕ. Ку ĕç мирлĕ тапхăр пуçланнă хыççăн татах та анлăн сарăлса кайрĕ. Иртнĕ кунсенче çеç СССР Совнаркомĕ Казахстанпа Латвире академисем уçма пуçлă пачĕ. СССР медицина академийĕн составне çĕнĕрен 39 академик, 44 член-корреспондент кĕчĕ.

Октябрьти социализмлă революци пирĕн çĕршыври халăхсен дворянла-буржуалла-помещикле режимĕ путлантарса тăнă вăйне ирĕке кăларчĕ. Совет сыннисен творчествăллă вăйĕ халĕ çав тери хăватлăн аталанса пырса питĕ пысăк результатсем парать. 1938 çулта Кремльти йышăнура Сталин юлташ советăн талантлă, хăюллă та пултарулăх сыннисем çинчен каласа черкке çĕклерĕ. Эпĕ «пурăнма тата кĕрешме, социализмлă строительствăн пур пайĕсенче те кĕрешме шутлакан çынсен сывлăхĕшĕн, пурăнса тăшмана çĕнтерме, çĕнтерӳ тăвас тесе пурăнма шутлакан çынсен сывлăхĕшĕн черкке çĕклетĕп», терĕ. Пирĕн умра çав тери пысăк задачăсем тăраççĕ. Тăшман пирĕн творчествăллă мирлĕ ĕçе кансĕрлерĕ, эпир вуншар çулсем хушшинче тунине аркатса хăварчĕ. Анчах та большевиксен партийĕ воспитани парса çитĕнтернĕ совет сыннисем, аслă Сталин ертсе пынипе, мĕн кирлине пурне те тăвĕç, хамăран çĕршыва чеченлентерĕç, социализм строительствин пур пайĕнче те ывăнма пĕлмесĕр малалла пырĕç.

(«Правда» хаçатан ноябрĕн 22-мĕшĕнчи уыхтат.

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тăратаççĕ

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиссисен составне кандидатсем тăратас ĕç малалла пырать.

Çĕрпӳ округĕнчи суйлав комисси составне кандидатсем тăратнă. ВКП(б) Чурачăк райкомĕ йышăннă тăрăх, районри коммунистсен организацийĕнчен ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне Федор Павлович Романов юлташа кандидата тăратнă. Госучреждени работникĕсен Чурачăк районĕнчи месткомĕ Андрей Емельянович Емельянов юлташ кандидатурине тăратма йышăннă. Чурачăк районĕнчи „Красный самолет" колхоз членĕсем, пĕр саслă пулса, Дарья Лукинична Лукина юлташа, колхозра стахановла ĕçлекенскере, кандидата тăратнă. Шахасан районĕнчи Куйбышев ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем хăйсен пухăвĕнче суйлав комиссин составне колхоз председательне Сергей Христофорович Христофоров юлташа кандидата тăратнă. Çĕрпӳри ялхуçалăх техникумĕн преподавателĕсен, служащийĕсен тата вĕренекенсен коллективĕ техникум преподавателĕн, ВКП(б) членĕн Роман Семенович Афоньев кандидатурине тăратма йышăннă. Çĕрпӳ районĕнчи „Чуваш ЦИК" ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем колхоз председательне Георгий Осипович Скворцов юлташа кандидата тăратнă. Çĕрпӳ районĕнчи пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюз членĕсен пухăвĕ, пĕр сасла пулса, Çĕрпӳри вăтам шкул учителĕн Николай Христофорович Христофоров юлташăн кандидатурине тăратма йышăннă.

Йĕпреç округĕнчи суйлав комиссине кандидатсем тăратас тĕлĕшпе пухусем пулса иртрĕç. Первомайски районри „Большевик" ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем хăйсен пухăвĕнче суйлав комиссин составне колхоз председательне Филипп Гаврилович Гаврилов юлташа кандидата тăратма йышăннă. Гаврилов юлташ Отечественнăй вăрçăра пулса II-мĕш степень Отечественнăй вăрçа орденне илнĕ. Тылра хастарлăн ĕçленĕшĕн ăна правительство «Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе наградăланă. Пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи ĕçлекенсен профсоюзĕн Первомайски райкомĕ Евгения Логиновна Колькина юлташ кандидатурине тăратнă. Вăл Первомайски районри сутĕç пайĕнче инспектор пулса ĕçлет. Йĕпреç МТС-ĕнчи рабочисемпе служащисем, пĕр сасла пулса, суйлав комиссин составне трактор бригадин бригадирне, комбайнĕçĕн мастерне Петр Маркиянович Маркиянов юлташа кандидата тăратнă. Йĕпреç районĕнчи „Путиловец" ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсен пухăвĕ колхоз председательне Александр Трофимович Тазенов юлташа кандидата тăратма йышăннă. Коммунистсен Йĕпреç районĕнчи организацийĕнчен Николай Матвеевич Матвеев юлташа — ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарьне кандидата тăратма пĕрсаслăн йышăннă. Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕ вăрманпромхозри технически директор пулса ĕçлекен Яков Максимович Цветков кандидатурине тăратма йышăннă. ВЛКСМ Йĕпреç райкомĕ йышăннă тăрăх, суйлав комиссин составне комсомолăн районри организацийĕнчен ВЛКСМ райкомĕн иккĕмĕш секретарьне — Анастасия Алексеевна Егорова юлташа кандидата тăратнă. Йĕпреç районĕнчи пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн райкомĕ Степан Николаевич Кузнецов юлташа — Йĕпреçри вăтам шкул директорне кандидата тăратнă.

Вăрмар округĕнчи суйлав комиссин составне кандидатсем тăратас тĕлĕшпе те пухусем пулса иртнĕ. Вăрмарти Спортинвентарь фабрикинчи рабочисемпе служащисен коллективĕ, пĕр саслă пулса, фабрикăри работница-стахановкăсене Анна Абрамовна Абрамова тата Акулина Семеновна Семенова юлташсене кандидата тăратма йышăннă. Вăрмар районĕнчи „Большевик" колхоз членĕсен пухăвĕ колхоз председательне Василий Алексеевач Алексеев юлташа кандидата тăратма йышăннă. ВКП(б) Вăрмар райкомĕ йышăннă тăрăх, суйлав комиссин составне Михаил Иванович Бойков юлташа—ВКП(б) райкомĕн иккĕмĕш секретарьне кандидата тăратнă. Пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн Вăрмар райкомĕ Константин Павлович Павлов юлташăн кандидатурине тăратма йышăннă. Вăл Вăрмар районĕнчи сутĕç пайĕн заведующийĕ пулса ĕçлет. Вăрмар районĕнчи „Дружба" ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем Иван Григорьевич Григорьев юлташа, колхоз председателĕ пулса ĕçлекенскере, кандидата тăратнă. Комсомолăн Таван районĕнчи организацийĕнчен округри суйлав комисси составне ВЛКСМ членне Зоя Сергеевна Портнова юлташа кандидата тăратнă.

Канаш округĕнчи суйлав комисси составне кандидатсем тăратас тĕлĕшпе те пухусем пулса иртеççĕ. Канаш хулинчи сывлăх пайĕнче ĕçлекенсен пухăвĕ Вера Алексеевна Алексеева юлташа кандидата тăратнă. Вăл Канаш больницинчи хирурги отделенийĕнче медицина сестри пулса ĕçлет. Канаш районĕнчи „Красная звезда" колхоз членĕсем хăйсен пухăвĕнче, пĕр сасла пулса, суйлав комиссин составне колхозри сысна пăхакана Зоя Петровна Осанова юлташа кандидата тăратнă. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна правительство „Ĕçри хастарлăхшăн" медальпе наградăланă. Пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн Канаш райкомĕн ларăвĕ Аслă Мамири çичĕ çул вĕренмелли шкул директорне Евграф Иванович Иванов юлташа кандидата тăратма йышăннă. Иванов юлташ 30 çул хушши ĕнтĕ ачасене вĕрентсе вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна правительство „Ĕçри хастарлăхшăн" медаль парса наградăланă. Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем колхоз председательне Сергей Филиппович Филиппов юлташа кандидатурине тăратнă.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВАН ÇАПАС ĔÇ НОЯБРĔН 10-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Аван çапнă
1. Шăмăршă	99,5
2. Чкаловски	96,5
3. Елчĕк	96,1
4. Йĕпреç	95,8
5. Вăрнар	95,5
6. Шупашкар	92,8
7. Калинино	92,0
8. Ишлей	91,9
9. Куславкка	91,6
10. Канаш	91,2
11. Красноармейски	91,1
12. Шăхасан	90,5
13. Первомайски	90,1
14. Улатăр	90,1
15. Вăрмар	89,2
16. Çĕрпӳ	88,7
17. Хĕрлĕ Чутай	88,1
18. Таван	87,8
19. Комсомольски	87,7
20. Сĕнтĕрвăрри	86,8
21. Советски	86,4
22. Кувакино	85,4
23. Муркаш	85,2
24. Элĕк	85,1
25. Октябрьски	85,0
26. Етĕрне	82,2
27. Чурачăк	82,0
28. Сĕнтĕр	80,9
29. Çĕмĕрле	79,1
30. Пăрачкав	76,5

Элĕкпе Красноармейски районсем государствăна тырă памалли плана тултарнă

Вăрмар, Етĕрне, Советски, Сĕнтĕр тата Чурачăк районĕсем хыççăн, ноябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне Элĕкпе Красноармейски районсенчи колхозсем государствăна тырă памалли плана тултарчĕç. Татах та чылай районсем государствăна кĕçех тырă парса татаççĕ. Çавăн пек районсенчен Муркаш, Çĕрпӳ, Шăхасан, Калинино, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр районсене палăртмалла. Çав районсен тахçанах государствăна тырă парса татмалли майсем пулнă, анчах та вĕсем çав-çавах пĕр выранта тапăртатса тараççĕ-ха. ВКП(б) Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ хыççăн Муркаш районĕ пĕтĕшне те 4 процента яхăн çеç ӳсĕм тунă.

Пленум хыççăнхи вăхăт хушшинче Улатăр, Первомайски, Чкаловски, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай тата ытти хăшпĕр районсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе чăтма çук япăх ĕçлерĕç. Çак районсен руководителĕсем пленум решенине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çителĕксĕр тăрăшаççĕ.

Парти Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ ноябрĕн 25-мĕшĕччен государствăна тырă парса татма хушса хăварчĕ. Çавăнпа та пур районсен те авăн çапас, тырра типĕтсе татас, ăна хатĕрлев пунктне леçес ĕçсене пур майсемпе те хăвăртлатма малла.

Совет çĕршывĕ тăрăх

РИГА ХУЛИНЧЕ ТРОЛЛЕЙБУС ÇУРЕМЕ ПУÇЛАТЬ

Латви ССР-ĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Рига хулинче троллейбуспа çӳрес ĕçе организацилеме йышăннă. Троллейбус çулĕ 35 километр тăршшĕ пулать, вăл хула варрине Меже-паркпа тата хула тулашĕнчи ытти парксемпе çыхăнтарать.

Троллейбус çулĕсен чи малтан тумалли пайне 1946 çул пуçламĕшĕнче тума тытăнаççĕ. (ТАСС).

ЛЬВОВ ХУЛИНЧЕ ПАРК-МУЗЕЙ ТĂВАССĔ

ЛЬВОВ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Львовра парк-музей тума пуçлама хатĕрленеççĕ, вăл Совет Союзĕнче пĕрремĕш парк-музей пулать. Çӳллĕ замок районĕнчи 200 гектар çĕр çине—хулари чи илемлĕ вырăнсенчен пĕрине Украина халăхĕн историйĕн тата унăн йăлисемпе культурин памятникĕсене пухмалла. Карпат çинчи, Карпат леш енчи тата Украинăн хĕвелтухăç облаçĕсенчи халăхсем çинчен этнографи материалĕсем хатĕрленĕ ĕнтĕ. Украинăн йывăç çурт архитектурин, пурлăх культурин, халăх промыслине искусствин материалĕсене пухнă.

Сывăх вăхăтра инженерсен-архитекторсен ушкăнĕ çав паркăн тĕп планне-макетне хатĕрлеме тытăнать. Паркри экспонатсем Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтне те кăтартĕç.

Материалсене хатĕрлес ĕçе Украина наукин, культурин тата искусствин чи паллă работникĕсем хутшăнаççĕ. (ТАСС).



СССР Наука академине тунăранпа паян 220 çул тултарчĕ.
Укерчĕк çинче: СССР Наука академийĕн Президиумĕн çурчĕ (Мускавра).
Г. ШИРОКОВ фотоукерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

ПСКОВ ХУЛИНЧЕ В. И. ЛЕНИН ПАМЯТНИКНЕ ЛАРТНĂ

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Псков хулине йышăнсан, вĕсем унти В. И. Ленин памятникне пăчкăпа каснă та Псковран илсе кайнă. Псков хулине ирĕке кăларнă хыççăн ĕççыннисем Владимир Ильич Псковра пурăннипе сыхăнса тăракан историллĕ вырăнсене юсама пуçтăннă.

Псков çыннисем ыйтнипе унта Владимир Ильичăн бронзăран тунă кĕлеткине илсе пынă. В. И. Ленин памятникне вара ĕлĕкхи вырăнах — Советсен Çурчĕ умĕнчи площадех лартнă. (ТАСС).

Ф. М. ДОСТОЕВСКИН МУЗЕЙ-ХВАТТЕРĔ

Мускавра Ф. М. Достоевскин музейне юсанă та çĕнĕрен уçнă. Унта, Новая Божедомка урамĕнчи пысăк мар хваттерте, писатель мĕн вилнченех пурăннă.

Çав музейре Достоевский произведенийĕсен пĕрремĕш кăларăмĕсене, унăн алçырăвĕсене, фотоукерчĕкĕсене, писательпе унăн çывăх çыннисен фотографийĕсене пухнă. Достоевскин акăлчан, француз, немĕç, китай тата ытти чĕлхесемпе пичетлесе кăларнă произведенийĕсене уйрăм пухса хунă.

Музейре писателĕн Питĕр хулинчи хваттерĕнчен илсе пынă сĕтелĕпе тенкелĕ пур. Писателĕн хăйĕн ăпалисене—куслăхне, сĕтел çине лартакан шăнкравне, ручкипе пернине вырнаçтарса хунă; писатель хăйĕн«Братья Карамазовы» ятлă романне çав ручкăпа çырнă.

Табак ешчĕкĕ çине писателĕн 11 султи хĕрĕ çапла çырса хунă: «1881 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче 9 сехетре атте вилчĕ», тенĕ.

Достоевскин малтанхи портречĕ, фарфор çине укернĕ портречĕ (Стокгольмра тунăскер) тата писатель вилсен унăн питне укерсе илнĕ макет интереслă.

Музейре тата Достоевскин кĕнекисен уйрăм экземпляписене кăтартнă, çав страницăсем çинче унăн арăмĕ А. Г. Достоевская асăрхаттарса çырса хунисем пур. (ТАСС).

„1941—1945 çулсенче Отечественнăй аслă вăрçăра хастар ĕçленĕшĕн" медальсем пачĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ноябрĕн 18-мĕшĕнче Райсовет исполкомĕн председателĕ В. Осипов юлташ „1941—1945 çулсенче Отечественнăй аслă вăрçăра хастар ĕçленĕшĕн" медальпе наградăланисене медальсем пачĕ.

Чăвăл наградăна илме район центрĕнчи учрежденисен руководителĕсемпе ялти шкул директорĕсем пуçтарăннă. Чи малтанах наградăна ВКП(б) райком секретарĕсем М. Гладков юлташ, ун хыççăн Т. Герасимов юлташсем илчĕç. Вĕсем хыççăн районри çĕрĕç пайĕн заведующийĕ Скворцов юлташ, Хатерлев Халăх Комиссариачĕн райсипри уполномоченнăйĕ И. Яковлев юлташ, вăтам шкул директорĕсем А. Гурьевпа Н. Григорьев юлташсем тата ыттисем те, пурĕ 42 çын илчĕç.

Награда илнисенчен А. Гурьев тата Н. Григорьев юлташсем ответлă сăмах тухса каларĕç. Вĕсем хăйсен ĕçĕсене çав тери пысăка хурса хаклanăшăн партипе правительствăна, Сталин юлташа тав турĕç, малашне тата лайăхрах ĕçлеме сăмах пачĕç.

Юлашкинчен В. Осипов юлташ награда илнисене саламласа, вĕсене малашне те ăнăçла ĕçлесе пыма сывлăх сунчĕ.

Пушă сăмах мар, лайăхрах ĕçлени кирлĕ

ИШЛЕЙ. Район государствăна тырă парас тĕлĕшпе çаплах юлса пырать. 86 колхозран 47 колхоз çеç государствăна тырă парса татнă.

Мăнал ял Советĕнчи «Тимĕр сирми» колхоз государствăна тырă памалли плана 60—70 процент кăна тултарнă. Калинин ячĕпе тăракан колхоз октябрĕн 25-мĕшĕнчен вара пĕр килограмм тырă та лесмен. Колхоз председателĕ Е. Яруткин юлташ государствăна тырă парас ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Тулă тăсма мар, тесе лесмесĕр тăрать, çав вăхăтрах ăна тасатас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Колхозпа юнашар «Тимер сирми» колхозрах тимер пур, ăна илсе пырса усă курмаççĕ.

Çак ял Советĕнче райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн уполномоченнийĕ М. Петров яланах пурăнать. Унта Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнийĕ Е. Михайлова юлташ та кашни эрнерех пулать, анчах ĕçе кирлĕ пек организацилеме вĕсенчен нихăшĕ те тăрăшмаççĕ.

Анат-Кĕнер ял Советĕнчи «Прожектор» колхозăн 350 центнер, «Активист» колхозăн 400 центнер государствăна тырă памалла. Ку ял Советĕнче тырă вырма пуçăннăранпа райсовет исполкомĕн председатель заместителĕ И. Яковлев пурăнать. Çак чылай вăхăт хушшинче колхоза пулăшса, ĕç дисциплинине çирĕплетсе колхозра аван çапăссине организацилеме май пулнă. Анчах та вăл кунта пуш сăмахсемпе калаçса ларсах вăхăта ирттернĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ тырă памалли плана ку колхозсем 20—30 процент çеç тултарнă.

Натуроплата памалли плана тултарассишĕн машинно-тракторнăй станцин директорĕ Рязанов юлташ нимĕнле ответлăха та туймасть. Натуроплата планне тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлес вырăнне, МТС бригадирĕсем сиенлĕ ĕçсем тăваççĕ. Машиновед П. Орлов молотилкăпа колхоза пырсан ĕçкунĕпе тухакан тырра малтан памасан авăн çапма тытăнмасăр ĕçе чăрмантарса тăрать.

Государствăна тырă памалли плана тултарас ĕç ытла та юлса пыни Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнийĕ ӳрĕк-çӳрĕк ĕçленинчен те чылай килет. Унăн аппаратĕнче 18 çын ĕçлет, вĕсенчен 10 агент ялсенче çӳреççĕ, ытти сем учет ĕçне тăваççĕ. Анчах та, вĕсенчен чылайăшĕ вăхăта сая ярса çеç пурăнаççĕ, нимĕнле ĕç те тумаççĕ. Ентимеркасси ял Советĕнчи агент П. Смелов «Комбайн», «Чăваш Коммуни» колхозсенче нихçан та пулмасть, вăл колхозсенче тырă парас ĕç мĕнле пынине интересленмест. Çав колхозсем тырă памалли плана 50—60 процент çеç тултарнă. Чантăр ял Советĕнчи И. Петров, Васликасси ял Советĕнчи Ф. Белова агентсем те тырă памалли плана тултарассишĕн пачах та ĕçлемеççĕ. Районĕпе единоличниксен 98 центнер тырă памалла пулсан, вĕсем халĕ 10 центнер кăна панă. Мамăш ял Советĕнчи агент К. Смирнова суйма тытăннă. Ял Советĕнчи единоличниксен государствăна памалли тырра пĕр çĕре пухса хунă тесе пĕлтернĕ, тĕрĕслене хыççăн пĕр килограмм та тырă пухманни палăрнă.

Государствăна тырă памалли плана тултарасине вăраха яни çак сӳлте асăннă ситменлĕхсемпе гаччăн сыхăнса тăрать.

Çак ситменлĕхсем çинчен райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕнче тахçантанпах калаçаççĕ пулсан та, вĕсем çав-çавах малалла тăсăлса пыраççĕ, унпа пĕрле вара тырă памалли плана тултарасси те юлса пырать.

Государствăна тырă памалли вăхăта тăсмалла мар. Ку ĕçри ситменлĕхсене халех пĕтермелле. Пуш сăмах мар, çирĕппĕн ĕçлени кирлĕ. **В. ГУСЬКОВ.**

ФРАНЦИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО

ПАРИЖ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: де Голль генерал Франци правительствине туса хунă. Унта çаксем кĕреççĕ:

Вăхăтлăх правительствăн председателĕ —генерал Шарль де Голль; хĕçпăшалла вăйсен пуçлăхĕ пулса тăрса, вăл нации обороннине ертсе пырас ĕçе те хăй çине илнĕ. Нации обороннине ертсе пырас тĕлĕшпе çаксем де Голль генералăн помощникĕсем пулса тăраççĕ: хĕçпăшалла вăйсен министрĕ—Эдуард Мишле («Халăхпа республика юхăмĕ» ятлă партирен) тата хĕçпăшал министрĕ—Шарль Тийон (коммунистсен партийĕнчен);

Партфельсĕр министрсем—Венсан Орноль (социалист), Франсиск Ге («Халăхпа республика юхăмĕнчен»), Луи Жакино (республикăллă юхăмран), Морис Торез (коммунист);

Юстици министрĕ—Анри Тетжен («Халăхпа республика юхăмĕнчен»);

Шалти ĕçсен министрĕ—Адри Тиксье (социалист);

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Жорж Бидо («Халăхпа республика юхăмĕнчен»);

Экономика министрĕ—Франсуа Бийю (коммунист);

Финанс министрĕ—Рене Плевен;

Промышленность производствин министрĕ—Марсель Поль (коммунист);

Çĕр ĕçĕпе снабжени министрĕ—Танги Прижан (социалист);

Ĕç министрĕ—Амбруаз Круаза (коммунист);

Сутĕç министрĕ—Поль Жакоби (радикал-социалист);

Колонисен министрĕ — Жак Сустель («Демократсемпе социалистсен тăшмана хирĕç тăракан союзĕнчен»);

Почтăпа телеграф министрĕ—Эжен Тома (социалист);

Халăх тĕлĕшпе ĕçлекен министрĕ — Робер Прижан («Халăхпа республика юхăмĕнчен»);

Реконструкцине хула юсавлăхĕн министрĕ—Рауль Дотри;

Информаци министрĕ—Андре Мальро.

Çапла ĕнтĕ, правительствăна 5 коммунист, 5 социалист, «Халăхпа республика юхăмĕнчен» 5 член, Демократсемпе социалистсен тăшмана хирĕç тăракан союзĕнчен пĕр представитель, пĕр умеренлăх член, виçĕ специалист—Дотри, Мальро тата Плевен кĕнĕ.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче де Голль генерал правительствăн членĕсене çирĕплетме Учредительлăх пухăва тăратать.

ПАРИЖ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: де Голль генерал тунă çĕнĕ правительствăра 21 член, урăхла каласан, ун умĕнхи правительствăринчен пĕр член сахалтарах. Çар, тинĕс-çар тата авиаци министерствисем вырăнне икĕ министерство туса хунă: хĕçпăшалла вăйсен министерстви тата хĕçпăшал министерстви, вĕсене де Голль пĕтĕмĕшле ертсе пырать, вăл пĕр вăхăтрах правительство пуçлăхĕ тата наци оборонин руководителĕ пулса тăрать. Тыткăна лекнĕ сынсем тата кăларса янă сынсем тĕлĕшпе ĕçлекен министерствăна хупнă. Снабжени министерствине çĕрĕç министерствине пĕрлештернĕ, сывлăхпа общество гигиени министерствине тата Франци сынсем куçса килес ĕçсемпе семье ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен управление пĕрле халăх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен министерство туса тăнă.

ТРУМЭН ПРЕСС-КОНФЕРЕНЦИРЕ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Трумэн президент пресс-конференцире Америка çарĕн штабĕн начальникне Маршалл генерала халех вырăнтан кăларса, ун вырăнне Эйзенхауэра лартасси çинчен калаçа панă. Кунсăр пуçне, Трумэн Америка çарĕн штабĕн начальник заместителĕ пулса ĕçленĕ Джозеф Макнерни генерала Америкăн Европăри çарĕсен командующийĕ вырăнне лартни çинчен тата ăнах Америкăн Германири контроль советĕнчи представителĕ пулма лартни çинчен пĕлтернĕ, çав вырăнсенче халиччен Эйзенхауэр ĕçлесе тăнă. Трумэн Америка флочĕн главнокомандующине флот адмиралне Кинга вырăнтан кăларса, çав вырăна флот адмиралне Нимица лартни çинчен пĕлтернĕ. Трумэн калаçнă тăрăх, Америкăн Лăпкă океанри командующийĕ пулма (Нимиц вырăнне) Спрюэнс адмирала лартаççĕ.

Корреспондентсен ыйтăвĕсем çине ответлесе, Трумэн çапла калаçнă: Америка çарĕн сывлăпри вăйăсен командующийĕ армин генералĕ Арнольд тата Америка çарĕн интендант службин начальникĕ Самервелл генерал вырăнтан тухнă, анчах та вĕсем вырăнтан тухнине эпĕ килĕшмен-ха, тенĕ. Пĕр корреспондент Трумэна çакна аса илтернĕ: Эйзенхауэр Пĕрлешӳллĕ Штатсен хĕçпăшаллă вăйăсене пĕрлештерессишĕн тăнă, Нимиц та çавна хирĕç тăман, тенĕ. Вара Трумэнран çапла ыйтнă: çак ыйту пирки эсир хăвăрăн шухăшăра каласа памăр-ши? тенĕ. Трумэн çапла ответленĕ: эпĕ хамăн шухăшсене конгреса ярас сырура пĕлтерĕп.

Рабочисемпе предпринимательсен конференцийĕ çинчен ыйтсан, Трумэн çапла ответленĕ: конференци усăллă тухне эпĕ сĕннĕ пек, конференци рабочисемпе предпринимательсем хушшинчи хирĕçĕве майлаштарса ямалли программа сырса хатĕрлĕ тесе шăнма пулать-ха, тенĕ. Детройтри автомобиль промышленноçĕнче забастовка пусланса каяс хăрушлăха сирсе яракан çĕре Шурă Сурт хутшăнассине кăтартакан паллăсем пур-и? тесе ыйтсан, Трумэн сук тенĕ.

Нимĕçсен тĕп вăрçă преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

НОЯБРĔН 21-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери çар трибуналĕн ноябрĕн 21-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕ айăпланакансене хӳтĕлекен Дик доктор тухса каланипе пуçланнă. Мĕнпур хӳтĕлекенсен ячĕпе вăл трибуналтан кунсеренех лару пуçланиччен айăпланакансемпе курса калаçма ирĕк паман ыйтнă. Суд тунă вăхăтра хӳтĕлекенсене айăпланакансемпе калаçма ирĕк паман пирки çапла ыйтатăп, тенĕ вăл. Трибунал председателĕ Лоуренс хӳтĕлекенсем ыйтнине сирсе янă, анчах та суд ларăвĕсем вăхăтĕнче вĕсене айăпланакансемпе хут тăрăх сыхăнма ирĕк панă.

Унтан Розенберга хӳтĕлекен адвокат тухса калаçнă. Вăл трибунала çакăн çинчен пĕлтернĕ: Розенберг мана хут çырса начĕ; унта вăл суд унран «айăплă-и?» тесе ыйтнине хирĕç мĕнле ответ парасси çинчен калать. «Розенбергпа калаçса илме май пултăр тесе, пăртакпăха перерыв тума ыйтатăп. Ытти хӳтĕлекенсем те перерыв тума ыйтаççĕ», тенĕ вăл. Трибунал председателĕ Лоуренс вăл ыйтнипе килĕшнĕ. Вара 15 минутлăха перерыв тунă. Анчах та вăл защитниксене çакăн çинчен астутарнă; сирĕн айăпланакансемпе калаçмалăх вăхăт темиçе эрне те пулнă, тенĕ.

Перерыв хыççăн трибунал председателĕ айăпланакансенчен кашниненех ыйтма пуçланă. Чи малтан микрофон умне айăпланакан Герман Геринг пырса тăрать. Унăн аллинче пĕр листа хут. Вăл калама хатĕрленет, анчах та председатель ăна чарать. Вара Геринг çапла калать: эпĕ хама айăпласа çырнинче калана пек айăплă тесе шутламастăп, тет. Ун хыççăн хăй вырăнĕнчен Гесс сиксе тăрать те: «Эпĕ айăплă мар», тет. Ун хыççăн Риббентроп тăрать те шăппăн çапла калать: «Эпĕ хама айăпласа çырнинче кăтартнă пек айăплă тесе шутламастăп, тет. Генерал-фельдмаршал пулнă Кейтель тата ытти айăпланакансем те çавăн пекех хăйсен айăпне йышăнманни çинчен калаççĕ.

Трибунал председателĕ çапла пĕлтерет: айăпланакан Кальтербруннер сывмар пирки, унăн ĕçне хăйсĕрех пăхатпăр, тет.

Айăпланакансенчен пуринчен те ыйтса пĕтернĕ.

Ун хыççăн вара Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тĕп айăплакинĕ Роберт Джексон сăмах тухса калать.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕН БЕЛЬЗЕНРИ КОНЦЕНТРАЦИЛЛĔ ЛАГЕРĔНЧИ ПАЛАЧСЕНЕ СУД ТУСА ПĔТЕРНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Люнебургран пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсен Бельзенри концентрациллĕ лагерĕн палачĕсене суд туса пĕтернĕ. Вĕсене 7 эрне ытла суд тунă. 30 айăпланаканран 11-шне вĕлермелле приговор йышăннă, ытти 19 айăпланакана тĕрлĕ вăхăтлăха хупмалла тунă.

Лагерь комендантĕ пулнă Иозеф Крамера, Клейн доктора, Петер Вайнгартнера, Франц Гесслера, Ирма Грозене. Элизабет Фолькенрата, Иоганна Бормана, Вильгельм, Дора, Пихена, Карл Франциха тата Франц Штофеле çакса вĕлермелле тунă.

Индонезири çапăçусем

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Ява утравĕ çинчи командованийĕн штабĕ Индонезири çапăçусем çинчен ноябрĕн 19-мĕшĕнче Батавире пичетлесе кăларнă пĕлтерĕве парать. Çав пĕлтерӳре çапла калана: Сурабайăра хулинче кĕпер районĕнче перкелешнĕ. Союзниксен артиллерийĕ замокран персе тăракансене пеме чарса лартнă. Батавире Крамат районĕнче çĕрĕпех хире-хирĕç персе тăнă. Семаранг районĕнче Англи çарĕсем чи кирлĕ позицисене йышăнса тăраççĕ.

САН-ФРАНЦИСКО, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Сан-Францискăри радио Ассошиэйтед Пресс агентстви пĕлтернине парать. Ассошиэйтед Пресс агентстви çапла пĕлтернĕ: Ява утравĕн вăтаçĕрти пайĕнче индонезиецсен лидерĕсем Индонези çарĕнне акăлчансене çав утрав çинчен хăваласа яричченех çапăçма чĕнеççĕ. Британин Ява утравĕ çинчи командованийĕ çавăн пирки пăшăрханать. Голландин Батавири влаçĕсем индонезиецсен Семарангри губернаторне тытса хупма приказ панă. Сурабайăра 10-мĕш кун çапăçаççĕ ĕнтĕ. Британи çарĕсем майĕпен хулан кăнтăр пайне кĕрсе пыраççĕ, хулан çав пайĕ индонезиецсен аллинче тăрать-ха.

ИНДОНЕЗИРИ ВОССТАНИЕ ПУСАРАС ТĂНИ ÇИНЧЕН ĔÇРЕ США МĔНЛЕ ВЫРĂН ЙЫШĂНСА ПИРСОН КАЛАНИ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Вашингтон пост» хаçатăн обозревателĕ Пирсон çапла калана: çакна Америка халăхĕ пĕлмест-ха: Англипе Голландин Ява утравĕ çинчи çарĕсем валли кирлĕ япаласене Америка парохочĕсем çине тиес ĕçре Гуам утравĕ çинче Америка салтакĕсемпе усă кураççĕ. Çакăн пирки Америка салтакĕсем питĕ тарăхаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен часрах США-на тавăрнас килет. Вĕсем тата çартан киле янă салтаксене Америкăна илсе кайма уйăрса хунă пароходсемпе Индонезири восстание пусарас ĕçре усă курнине хирĕç протестлеççĕ. Нумаях пулмасть Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем акăлчансене «Стэнфорд Виктори» ятлă пароход панă. Акăлчансем вара, французсене Индо-Китайри восстание пусарма пулăштмашкăн, Мароко çарĕсене çав пароход çине тиесе Индо-Китая янă.

АНГЛИ ÇАРĔСЕМ ИНДОНЕЗИРИ ĔÇСЕНЕ ХУТШĂННИНЕ ХИРĔÇ АНГЛИРЕ ПРОТЕСТЛЕНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен, палата ларăвне хупнă хыççăн, çĕр çын ытла парламент членĕсемпе калаçма пухăннă, çав çынсем хушшинче упăшкисем Инçетри Хĕвелтухăçĕнче пурăнакан хĕрарăмсем те нумай пулнă. Çав çынсем Англи çарĕсене Индонезире çапăçма пăрахтарса, унтан илсе тухма ыйтнă. Кунсăр пуçне, Индипе Китайри обществăлă организацисен представителĕсем парламент членĕсемпе майор Вернон лейбористпа тата Ператин коммунистпа калаçнă. Çав представительсем хушшинче индонезиец студенчĕсен «Перхимпунам Индонезия» ятлă союзĕн председателĕ Дарусман пулнă.

Коммунистсен партийĕ хăйне уйăрам заявленни пичетлесе кăларнă. Вăл Индонезире халех çапăçма пăрахма ыйтать, лейбористсен организацийĕсемпе прогрессивлăй организацисене пурне те правительствăна çапла тумашкăн хистеме чĕнет. Заявленире çапла калана: Англин Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйăсене киле салатас ĕç лейбористсен правительствин Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири политики пирки чăрăнса тăрать. Çав çынсем вĕсем Япони фашизмне аркатса тăкмашкăн çара кайнă, вĕсем унта ыттн халăхсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнине пусарма кайман».

Нумаях пулмасть парламентăн 60 членĕ Индонезири халăхсем хăйсен никама пăхăнмалăхĕшĕн кĕрешнине пусарса лартас ĕçре Англин хĕçпăшаллă вăйăсемпе усă курнине хирĕç протестленĕ.

ГРЕЦИРИ ПОЛИТИКАЛЛĂ ЛАРУ-ТĂРУ

АФИНЫ, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Канелопулос правительстви вырăнтан тухнине йышăнса, регент премьер-министр пулса ĕçленĕ çынсене пурне те тата монархистсен партийĕн тăватă представительне васкаса канашлăва чĕннĕ. ЭАМ руководителĕсене тата сулахайри ытти партисемпе группировкăсен руководителĕсене çав канашлăва чĕнмен. Вăл канашлура Греципи политикаллă ларутăруна сыхăнса тăракан ытти партисемпе пурне те сӳтсе-явнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио Рейтер агентствин çак пĕлтерĕвне панă: Дамаскинос архиепископ Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бевин янă телеграммăна илнĕ. Çав телеграммăра Бевин Грецире коалицийлĕ правительство туса хума сĕнет тата моцархи çинчен халăхран ыйтса пĕлессине 3—4 çула хăварма сĕнет. Бевин телеграмминче çапла калана: çак икĕ условие йышăнсан, Великобритани Греци ушкăна парса пулăшĕ, тенĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Грецин çĕнĕ правительствине туса хума Греципи либералсен партийĕн лидерне Фемистоклес Софулиса хушнă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Софулис тăвакан çĕнĕ правительствăра ĕлĕкрех премьер-министр пулса ĕçленĕ Цудероса экономикăна сыхăнтарса тăракан министр вырăнне лартаççĕ. Правительствăн ытти членĕсен ячĕсене çав членсем присяга панă хыççăн пĕлтерĕç. Грецин çĕнĕ правительстви Георг короле Грецие тавăрасси çинчен халăхран 1948 султа ыйтса пĕлмелле тунă.

ФИНЛЯНДИРИ ПРОФСОЮЗСЕМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН ФЕДЕРАЦИНЕ КĔНĔ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 18-мĕшĕнче Хельсинки хулинче Финляндири профсоюзсен центрти пĕрлешĕвĕн уполномоченнийĕсен съезчĕ пулнă. Съезд Финляндири профсоюзсем тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ йышăннă решенисене тата Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен союзĕн уставне йышăннă; Финл[illegible] профсоюзсен центрти пĕрлешĕвĕн представителĕсем Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕнче çав пĕрлешӳ Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине кĕресси çинчен калаканине съезд çирĕплетнĕ, çавăнпа пĕр вăхăтрах вăл Финляндири профсоюзсен центрти пĕрлешĕвĕ пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен пĕрлешĕвĕнчен тухнине çирĕплетнĕ.

«ДИНАМО» КОМАНДИ АКĂЛЧАНСЕН СБОРНАЙ КОМАНДИНЕ 4:3 ХИСЕППЕ СĔНТЕРНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Тотенхэм» ятлă стадионра совет команди «Динамо» акăлчансен сборнай командипе футболла выляна. «Динамо» команди акăлчансен командине 4:3 хисеппе çĕнтернĕ.

—o—

„Динамо“ командин мухтавлă çĕнтерĕвĕ

Çапла ĕнтĕ футбола юратакансем нумайранпа кĕтнĕ вăхăт çитрĕ. Лондон стадионĕн ешĕл хирĕнче пирĕн Мускав футболисчĕсем акăлчансен «Арсенал» командин мастерĕсемпе тĕл пулчĕç. Çав командăн футболисчĕсене Англире «канонирсем» тесе мухтавлă ят панă. Çак матчăн çумаях та мар малтан Англири хаçатсем Российăра Англи футболĕпе «Арсенал» пĕр пĕлтерĕшлĕ япала тесе шутлани çинчен сырнăччĕ. Ку тĕрĕс ĕнтĕ! Лондонри «Арсенал» пек чаплă га мухтавлă команда тĕнчере урăх çук га пуль. Паллă «канонир»-«арсеналецсене» тахçанах ĕнтĕ Англири футбол вăйăпи чи лайăх йăлисене пĕтĕм тĕнчипе сыхласа усракансем вырăнне шутлаççĕ. Вĕсене футбол вăйăпи никам çĕнтерейми мастерĕсем тесе шутланă.

Мускаври «Динамо» командин футболисчĕсем Англире «Челси» командипе выляна чух никама та çĕнтерейменни, «Кардиф-Сити» командине çĕнтерни «арсеналецсене» пăшăрхантарма тытăннă. Паян «Динамо» командине хирĕç выляна «арсеналецсен» командин составĕнче «Арсенал» футболисчĕсем 4 сын кăна пулнă, ытти 7 футболист вара урăх командăсенчи чи лайăх мастерсем пулса тăраççĕ, нĕçне Англири чи вăйлă клубсенчен чĕнсе илнĕ. Ку шута Англири паллă сылтăм край Мэтьюс та кĕрет. Çакă ĕнтĕ Мускав командин капитанне Семичаснăй тĕлпулу ыран пулать тенĕ чухне хаçат представителĕсене çапла калама хистенĕ: динамовецсем хăйсене хирĕç вылякан командăна Англири сборнай командăсенчен пĕри тесе шутлаççĕ.

Лондон халăхĕ матчпа çав тери интересленнĕ. «Тотенхэм» стадионне футболла выляннине курма 100.000 çын ытла пынă. «Арсенала» хирĕç выляни футбол вăйăпине интересленекен Совет Союзĕнчи çынсене те çав тери пăшăрхантарнă. Вăйă пынă вăхăтра «Юлашки хыпарсен» ракцине Мускавран тăтăшах телеффопа шăнкăрттаттарса тăчĕç. Редакци Мускав сыннисене матч мĕнле пыни çинчен 600 справка ытла пачĕ.

Вăйă пирĕн футболистсем хăнăхман условисенче пулса иртрĕ; Мускав стадионĕсенче пулакан çынсем те çав условисенчен тĕлĕннĕ пулĕччĕç. Трибунăсене, вăйă хирне, футболистсене, хăнăхасене çав тери çăра тĕтре хупăрласа илнĕ. Пирĕн радиокомментатор Синявский каласа панинчен эпир çакна ăнланса илтĕмĕр; вăл «Тотенхэм» стадионĕнче пулин те, эпир хамăрăн приемниксем умĕнче курнинчен ытлашши нумаях курайман иккен. Çак матчра кам мĕнле выляннине тĕтре хупăрласа илнĕ, анчах та вăйă мĕнле пынине эпир ăнлантăмăр. Чи малтанхи самантран пуçласах динамовецсем «арсеналецсене» вăйлăн тапăннă, вара çур минут та иртмен, «Арсенал» хăнăхнине малтанхи пуçке сирпĕнсе кĕнĕ. Тĕтре татах та çăралса пынă. Выляма йывăрланнăçемĕн йывăрланнă, 15-мĕш минутра акăлчансем шута танлаштарнă. Вăйăн пĕрремĕш пайĕ пĕтес умĕн динамовецсен хăнăхнине акăлчансем татах икĕ пуçке çапса кĕртнĕ. Вăйăн пĕрремĕш пайĕ пĕтесси темиçе саманта çеç юлсан, динамовецсем акăлчансен хăнăхнине тепĕр пуçке çапса кĕртнĕ, çапла вара вăйăн пĕрремĕш пайĕнче акăлчансем çĕнтернĕ.

Вăйăн иккĕмĕш пайĕ те питĕ хĕрӳллĕ пынă: динамовецсем акăлчансен командин хăнăхнине икĕ пуçке çапса кĕртнĕ, вĕсен хăнăхнине акăлчансем пĕр пуçке те кĕртеймен. Çапла ĕнтĕ çак вăйăра Мускав футболисчĕсем çĕнтерчĕç: акăлчансен хăнăхнине вĕсем 4 пуçке çапса кĕртнĕ, Мускав футболисчĕсен хăнăхнине акăлчансем 3 пуçке çапса кĕртнĕ.

Кунта тата çакна асăрхаттарсан та питĕ вырăнлă пулмалла: акăлчансен профессионал-футболисчĕсем хăйсен çĕршывĕнче ют çĕршыв командисене нихăçан та парăнман. Йывăр та хăнăхман условисенче мухтавлă çĕнтерĕве Англири паллă «Арсенал» футболисчĕсенчен тата Англири чи лайăх клубсен футболисчĕсенчен туртса илме пултарнă динамовецсене тивĕçлипех мухтама та юрать.

Лев КАССИЛЬ.

Культпросвет учрежденийĕсем суйлава хатĕрленнĕ ĕçре

КАЛИНИНО. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн культпросвет учрежденийĕсен отделĕ октябрь уйăхĕнчех уйрăм кустсенче—Калининăра, Аçăмсырминче, Ермошкинăра, Çавалкассинче культпросвет учрежденийĕсенче ĕçлекенсен семинарĕсене туса ирттернĕ. Вăл семинарсенче партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсен секретарĕсем те пулнă. Унта СССР Верховный Советне суйламалли Положение вĕрентнĕ, Положение суйлавçăсем хушшинче ăнлантарассине тата суйлава хатĕрленес ĕçсене организацилессине сӳтсе-явнă.

Çакăн хыççăн районри вулав çурчĕсем суйлава хатĕрленес ĕçе хастарлăн хутшăнма пуçларĕç. Вĕсем суйлавçăсем хушшинче суйлав Положенине ăнлантарас ĕçе организацилеççĕ. Чи малтан агитколлективсем çумĕнче агитаторсене хăйсене суйлав Положенине тĕплĕн вĕрентнĕ тата ытти ыйтусене те ăнлантарса панă. Агитаторсен йышне халĕ, суйлава хатĕрленнĕ май, чылай ӳстернĕ. Ялсенче кашни 10 кил пуçне пĕр агитатор çирĕплетсе тухнă. Агитаторсем вара çав 10 килте килĕрен сӳресе е пĕр киле пухăнса суйлав Положенине вĕрентеççĕ тата суйлав пирки ытти ыйтусене ăнлантараççĕ. Суйлавçăсем, уйрăмăнах суйлава малтанхи хут хутшăнакан çамрăксем, тӳрех, пĕртан тата вăрттăн суйламалли ĕçерке çинчен, сасăласси мĕнле пулса иртесси çинчен ыйтса пĕлеççĕ.

Суйлав Положенине вĕрентес тата суйлава хатĕрленес ĕçсем уйрăмах Аçăмсырминчи вулав çуртĕнче лайăх пулса пыраççĕ. Вулав çурчĕн заведующийĕ Федорова юлташ тăрăшнипе кунта вулав çуртне чăн-чăн культура вучахĕ туса хунă. Вулав çуртне вăхăтра юсаса илемлетнĕ, сителĕклĕ таран вутă хатĕрленĕ, ятарласа витрина организацилеме. Унта СССР Верховный Советне суйламалли Положени, ССР Союзĕн Конституцийĕ, суйлав çинчен калакан ытти литература тата материалсем чылай. Суйлавçăсем кунта кулленех суйлавсем çинчен калаçу итлеççĕ.

Çавăн пекех суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе Кюльхĕрринчи (заведующийĕ П. Кушакова юлташ), Карачурари (заведующийĕ Н. Бурашникова юлташ), Щĕнерти тата Çавалкассинчи вулав çурчĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Щĕнерти вулав çурчĕн ĕçне И. Машановпа А. Егорова учительсем лайăх хутшăнса ĕçлеççĕ. Çавалкассинчи вулав çуртне партин пуçламăш организацийĕ лайăх пулăшса пырать.

Суйлава хатĕрленес ĕç сарăлса пынă май районри кашни вулав çурчĕ çумĕнчех хор, драма кружокĕсем организаци ленĕ. Вĕсем çĕнĕ юрăсем вĕренме тата çĕнĕ пьесăсем лартса пама хатĕрленеççĕ.

КУЛЬТУРĂПА ÇУТĔÇ УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕН ĔÇНЕ ЛАЙĂХЛАТМАЛЛА

Советски ялĕнчи вулав çурчĕ лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсенчен пĕри пулнă. Хальхи вăхăтра вулав çурчĕн ĕçĕ пачах курăнмасть. Кунти колхозниксем вулав çурчĕ пуррипе çукки çинчен те пĕлмеççĕ. Вулав çурчĕн пуçлăхĕсем тăтăшах улшăнса пычĕç. Ял Совет председателĕ М. Алексеев, вăлах пуçламăш парторганизацин секретарĕ, вулав çурчĕ валли çурт тупса паман. Вулав çурчĕ Тури Сăнарта, Анат Сăнарта, ял Совет канцелярийĕнче вырнаçкалана. Юлашкинчен ăна райцентрти культура çуртне вырнаçтарнă. Вулав çурчĕ, тӳррипе каласан, унăн ялалисем, паян кунченех унта выртаççĕ.

Кунта та «ĕç тухман». Вулав çурчĕн заведующийĕ Васильева унта уйăхра пĕрре çеç пырса пăхнă. Библиотекăри кĕнекесем, патефон пластинкисем, хуткупăс, сĕтел-пукансем çухалса пĕтнĕ. Анчах вулав çурчĕн заведующийĕ çавах ĕçукçи илсе пурăннă. Советски ял Советĕнчи вулав çурчĕ çапла майпа хăйĕн пĕлтерĕшне çухатрĕ. Вулав çурчĕн бюджечĕпе усă курман. Ял Совечĕ культурăллă ĕçе ертсе пырас вырăнне, унăн пĕртен пĕр центрне вулав çуртне аякка пăрса хăварнă. Ун çинчен ял Совет исполкомĕнче те сӳтсе-явмăн.

Çапла ĕнтĕ Советски районра культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсене хаклламаççĕ. Районра 21 суйлав çурчĕ, анчах вĕсенчен лайăх ĕçлекеннисене пӳрнепе шутласа кăларма пулать. Нумай вулав çурчĕсем пачăр ĕçлеççĕ. Тури Ачăкри, Этвенри, Кивтинкипри, Мăн Ямашри вулав çурчĕсем ячĕпе çеç шутланса тăраççĕ Вĕсем культурăллă-массăллă ĕçе туса пымаççĕ. Вулав çурчĕсен совечĕсем хут çинче çеç шутланса тăраççĕ.

Чылай вулав çурчĕсенче çĕнĕ хаçат-журналсем тупса вулама çук, хаçат витринисем туман, кружоксем ĕçлемеççĕ. Вулав çурчĕсен библиотекисенче кĕнекесем ытла та сахал.

Вулав çурчĕсен паян кунченех тивĕçлĕ çуртсем çук-ха. Асламас, Якаткасси, Щĕмпеш вулав çурчĕсем ытла та япăх çуртсене вырнаçнă. Якаткасси вулав çуртĕнче хаçат-журнал ларса вулама та пукансем çук. Вулав çурчĕсен заведующийĕсем хушшинче дисциплина начар. Сăмахран, Мăн Ямашри вулав çурчĕн заведующийĕ Николаева вулав çуртне эрнере пĕр-икĕ хутчен çеç пырса пăхать.

Колхоз клубĕсем районра 15 шутланаççĕ. Вĕсенчен «Хастарлăх» колхозăн клубĕ кăна йĕркелĕ ĕçлет. Ытти сенче клуб заведующийĕсем çук. Асламасра, Тури Ачакра клуб çурчĕсенчен складсем туса хунă.

Райисполкомăн культурăпа çутĕç учрежденийĕсене ертсе пыракан пайĕн заведующийĕ И. Волков, «Вăхăтлăх» тесе лартнăскер, ячĕшĕн çеç ĕçлет. Ялсенче те вăл сайра-хутра кăна пулать. Вăл епле ĕçленипе никам та интересленмест.

Кăçалхи июль уйăхĕнче ВКП(б) райкомĕн пленумĕ политикăпа çутĕç учрежденийĕсене çĕнĕ мĕнле пынине сӳтсе-яврĕ. Анчах [illegible]нпа чылай вăхăт иртрĕ пулсан та, улшăнусем пулмарĕç.

Халĕ СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра, районри культурăпа çутĕç учрежденийĕсен хăйсен ĕçне тивĕçлипе кăтартмалла.

КОЛХОЗРИ ДРАМКРУЖОК

ПЕРВОМАЙСКОЕ. «Красная Чувашия» колхозра кăçал комсомолецсемпе çамрăксем драмкружок организацилеме. Кружок членĕсем колхоз клубĕнче «Виçĕ сысна сури» «Гримм халлапĕсем», Телей çулĕ», «Вăрманта», «Чăваш халлапĕсем» пьесăсемпе шутлĕ юмахсем лартса панă. Вĕсем кӳршĕри колхозсенче те пулнă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.